Цифрăсен чĕлхипе

Ăнăçлăрах ĕçлеме те майсем пур

Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 13319 хуçалăх шутланать. Пĕтĕмпе 36,9 пин çын пурăнать, вăл шутран Муркаш ялĕнче 3171 çын. Ĕçлеме пултаракансем 18140 çын, ача сачĕсене 1275 ача çўрет, шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ 4420 ача, пенсионерсем 1021 çын. Кăçалхи январь–март уйăхĕсенче 92 ача çуралнă (иртнĕ çул çав вăхăтра 101 ача), 153 çын (иртнĕ çул 166) вилнĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта пĕтĕмпе 396501,3 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ку вăл 175,8 процент пулать. Ял хуçалăх продукцине туса илесси 17,2 процент ўснĕ, 81578 пин тенкĕпе танлашнă. Промышленность тата продукци тирпейлекен промышленность калăпăшĕ – 314923,3 пин тенкĕ (202 процент).

Уйрăмах ăнăçлă ĕçлекен предприятисен шутĕнче Муркашри кирпĕч заводне (пĕтĕмпе 15783 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ, продукци туса хатĕрлессине 103,9 процент ўстернĕ), Муркашри издательство çуртне (26,4 процент), «Сундырь-Хлеб» обществăна (30,4 процент), Муркашри сĕт-çу заводне (128,2 процент), «Сеспель» предприятие (135,1 процент), «Моргауши–Хлеб» обществăна (32,5 процент), «Милград» обществăна (76,7 процент), «Моргаушрайгаз» филиалне (32,1 процент) асăнмалла. Муркаш почтамчĕ вара иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 6,1 процент тухăçăртарах ĕçленĕ, 3594 пин тенкĕлĕх продукци реализациленĕ.

Ял тăрăхĕсен пĕтĕмĕшле тупăшĕ 2923 пин тенкĕпе танлашнă е иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 170,8 процент.

Январь–март уйăхĕсенче 12563,4 пин тенкĕлĕх (иртнĕ çул çав вăхăтра 11272 пин тенкĕлĕх) тўлевлĕ пулăшу панă. Вăл шутран пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ 3101,5 пин тенкĕ, «Моргаушрайгаз» филиалĕ 2305 пин тенкĕ, «Моргаушрайбыт» предприяти 1158,7 пин тенкĕ тата ытти предприятисем 5998,2 пин тенкĕ.

Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ 126407,3 пин тенкĕ пулнă (139,6 процент). Мăн Сĕнтĕр райповĕ иртнĕ çулхинчен 32,5 процент, Муркаш райповĕ 42,2 процент ăнăçлăрах ĕçленĕ. Обществăлла апатлану предприятийĕсем продукци реализацилессин калăпăшне ўстернĕ. Унăн калăпăшĕ Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 7825 пин тенкĕпе (138,8 процент), Муркаш райповĕпе 5674 пин тенкĕпе (134,1 процент) танлашнă.

Иртнĕ уйăхсенче пĕтĕмпе 1706,4 тонна (иртнĕ çул çав вăхăтра 1375 тонна) е 124,1 процент аш-какай реализациленĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе ку хисеп 612,6 тоннăпа (113,9 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе 15 тоннăпа (44,5 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсемпе 1078,8 тоннăпа (134,2 процент) танлашнă.

Пĕтĕмпе 10612,4 тонна (105,9 процент) сĕт суса илнĕ. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 2501,5 тонна (79,8 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 22 тонна (41 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 8088,9 тонна (118,4 процент). Кашни ĕне пуçне сăвăм январь–март уйăхĕсенче вăтамран 992 килогрампа танлашнă е иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 15,2 процент пысăкрах. Ял хуçалăх предприятийĕсенче вăтăм сăвăм 908 килогрампа (унччен 942 килограмм) танлашнă.

Самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 567 грамм (унччен 565 грамм), сыснасем 317 грамм (унччен 312 грамм) ўт хушнă, пăрусем пĕтĕмпе 774 пуç (73,2 процент), çурасем 3790 пуç (67,5 процент) илнĕ.

Пур йышши хуçалăхсенче усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 27,1 центнер (унччен 21,8 центнер) аш-какай туса илнĕ. Аш-какай туса илесси 24,3 процент ўснĕ. Сĕт туса илесси вара 11,2 процент ўснĕ, 100 гектар çĕр пуçне 109 центнерпа танлашнă. Ял хуçалăх предприятийĕсенче 100 гектар çĕр пуçне аш-какай туса илесси 10,1 процент ўснĕ пулсан, сĕт туса илесси 19 процент чакнă.

Сурăхсемпе качакасемсĕр пуçне пур йышши выльăхсен йышĕ те чакса пыни палăрать. Акă мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕ апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе 19278 пуçпа (92,2 процент), вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 6775 пуçпа (81 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 62 пуçпа (21,9 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 12441 пуçпа (101,4 процент) танлашнă.

Сăвакан ĕнесен шучĕ 10693 пуça юлнă (иртнĕ çул 11636 пуç) е 91,9 процент. Ĕнесен шутне пĕрлешўллĕ хуçалăхсенче 17,2 процент, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 72,7 процент, уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 3,8 процент чакарнă.

Сыснасем 16084 пуç шутланаççĕ. Иртнĕ çул çав вăхăтра вара 21602 пуç пулнă. Сыснасен шучĕ ял хуçалăх предприятийĕсенче унччен-хи çав вăхăтринчен 31 процент, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 32,5 процент сахалрах. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче тытса усракан сыснасен шучĕ вара кăштах ўснĕ, 3721 пуçран 3760 пуça çитнĕ.

Районĕпе 10958 пуç (106,7 процент) сурăхпа качака тытса усраççĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсенче вĕсен шучĕ 376-ран 354-на юлнă пулсан, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вĕсене 76 пуç (унччен 22 пуç), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 10528 пуç (унччен 9875 пуç) пăхса усрама тытăннă.

Лашасен шучĕ те палăрмаллах чакнă. Вĕсем халĕ районĕпе 295 (унччен 458) пуç. Ял хуçалăх предприятийĕсенче иртнĕ çул çак вăхăта 381 лаша шутланнă пулсан, кăçал – 229. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче те вĕсен шучĕ 73 пуçран 66-на кăна юлнă.

Январь–март уйăхĕсенче ял çыннисенчен 853,2 тонна (185 процент) сĕт сутăн илнĕ. Ку енĕпе Муркаш (278,6 процент) тата Мăн Сĕнтĕр (225,1 процент) райповĕсем, предпринимательсемпе заводсем (269,2 процент) аван ĕçлеççĕ.

Аш-какай сутăн илесси районĕпе 32,8 процент ўснĕ тата пĕтĕмпе 216,2 тоннăпа танлашнă пулин те, райпо коллективĕсем аш-какай сутăн илессин калапăшне чакарнă.

Строительствăра 16616,1 пин тенкĕ (155,3 процент) инвестицисемпе усă курнă. Вăл шутран харпăр хăйĕн çуртйĕрне тума 11180 пин тенкĕ (138 процент).

Э. СИМАКОВА,
район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.

Саккун пуриншĕн те пĕрре

Суд приставĕсем пычĕç пулсан...

Суд приставĕсен тĕп задачисенчен пĕри вăл суд тата Раççей Федерацийĕн ытти органĕсен акчĕсене вăйпах пурнăçлаттарасси пулса тăрать. Анчах та практикăра нумай чухне вĕсене хăйсен саккунлă ĕçне пурнăçлама май паман е чăрмантарнă тĕслĕхсене те курма пулать. Çакă вара вăл ытларах чухне кун пек хăтланни саккуна пăснипе çыхăннине ăнкарманнинчен килет. Кун пекки суд приставĕсем парăмçă патне киле пырсан унăн пурлăх тĕлĕшĕнчи ларутăрăвне палăртма ун патне киле кĕртменнипе, унăн пурлăхне арестлеме пăтăрмахсем кăларса тăратнипе çыхăннă.

Акă пĕррехинче суд приставĕсем М. гражданка патне киле парăм тўлессин ыйтăвĕпе пыраççĕ. Анчах та унăн йăмăкĕ хваттере кĕме памасть. Ку вара саккуна пăсни шутланать. Çапла вара 1-мĕш номерлĕ мировой судăн судийин йышăнăвĕпе ку гражданкăна административлă майпа айăплама, уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин 10 виçи чухлĕ штрафлама тивре.

Çавна манма кирлĕ мар. Гражданин парăмçă мар, парăмçи килте мар пулсан та унăн суд приставĕсене хăйсен ĕçне пурнăçлама майсем туса памалла. Унсăрăн çакă вăл Административлă майпа правăна пăснин кодексĕн 17.8 статйине пăсни шутланать, тепĕр майлă каласан, служба тивĕçĕсене пурнăçлакан суд приставĕсене хăйсен саккунлă ĕçне-хĕлне пурнăçлама чăрмантарни. Уншăн гражданссене уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин 10–15 виçи, должноçри çынсене – 20–30 виçи чухлĕ штрафлама пăхнă.

Ытларах тĕл пулакан тепĕр статья çинче те чарăнса тăмалла. Ку вăл Административлă майпа правăна пăснин кодексĕн 19.7 статйи. Ку вăл суд приставĕсем пырсан гражданссем вĕсене кирлĕ сведенисене хăй вăхăтĕнче паманнипе çыхăннă. Калăпăр К. гражданинăн суд приставĕ ыйтнипе ĕç вырăнĕнчен паракан справкăна уйрăм вăхăтра çитерсе памалла пулнă. Çакна гражданин пурнăçламан тейĕпĕр. Çавăншăн унăн уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин 3 виçи чухлĕ административлă штраф тўлеме тивет.

Суд приставĕсем хăйсен кулленхи ĕçĕнче вĕсен саккунлă требованийĕсене пурнăçлама килĕшмен тĕрлĕ тĕслĕхсемпе тĕл пулаççĕ: парăма тўлесе татнин квитанцийĕсене, тўлев поручениййĕсене, справкăсене, ыйтусем çине хуравсене паманни т. ыт. те. Манмалла мар, суд приставĕн çак саккунлă требованийĕсене пурнăçлама килĕшменшĕн гражданссене уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин 1–3 виçи, должноçри çынсене – 3–5 виçи, юридици вăйĕнчи çынсене 30–50 виçи чухлĕ штраф хума пултараççĕ. Раççей Федерацийĕн территорийĕнче суд акчĕсене пурнăçлаттарассипе суд приставĕсен требованийĕсене пур органсемпе организацисем те, должноçри çынсемпе гражданссем те пурнăçлама тивĕç.

Е. ИВАНОВА,
Муркаш районĕнчи суд приставĕсен пайĕн пай пуçлăхĕ, аслă суд приставĕ.

Вулакансен пултарулăхĕ

Пĕр эсĕ çеç юратнă-çке мана

Мĕнле пурнатăн, хаклă çын – аннеçĕм?
Каçар мана час-час çырманшăн эс.
Ялан асра тытать сана чĕреçĕм,
Чĕнет, кĕтет мана тăван кĕтес.

Çак туйăмпа çул хыççăн çул эп утрăм,
Ак çук текех ман çывăх çын – аннем.
Мĕнле-ха чунсăр, пит нумай эп чăтрăм,
Мĕнле-ха чăтрĕ тунсăха чĕрем?

Ак ачана ирех эс вăрататтăн
Кăмăлпала ачашшăн лăпкаса.
Кĕтў кĕртсен Улапуça сăваттăн
Е пир тĕрттеттĕн юрă юрласа.

Хĕрарăм та, арçын та эсĕ пулнă,
Нимле ĕçрен те пăрăнса тăман.
Эс чечекрех арçынсăр тăрса юлнă,
Апла пулин те эсĕултарман.

Аннеçĕм çук! Пуçа тайса тăратăп
Çерем те ак хуплана тăпрана.
Çулсем иртсен чĕрепелех туятăп –
Пĕр эсĕ çеç юратнă-çке мана.

Петр ВОРОБЬЕВ.

Шурă хурăн

Вун çиччĕре ман хĕрĕм лартрĕ
Пĕр пĕчĕк хурăн пўрт умне.
Вăл çитĕнет халь кашни çулăн,
Кармашăнать тўпенелле.

Турачĕсем ун усăнаççĕ
Çĕре çити пуçне тайса,
Чуп туса илнĕн туйăнаççĕ
Çĕр-аннеме варкăшпала.

Тўлек кăна çилĕ вĕрсессĕн
Сан çулçусем пăшăлтатаç.
Эп вĕсене тăнлас теетĕп –
Пĕр-пĕринпе-ши калаçаç.

Шап-шурă тумлă йăрăс хурăн,
Эсĕ ларатăн пĕр-пĕччен,
Куллен эп сан патна тухатăп,
Ешерсем эсĕ çĕр çулччен.

Августина ЗУБКОВА.

Чăваш чĕлхин кунĕ умĕн

Патриарх ячĕпе

Чăваш наци музейĕнче И.Я. Яковлев 160 çул тултарнине халалласа чăваш кĕнекин фестивальне ирттерчĕç. Унта республикăри «Çулталăк кĕнеки» конкурса пĕтĕмлетрĕç. Çак конкурса пурĕ 13 районти 300 библиотека хутшăннă.

Çĕнтерўçĕсем хушшинче пирĕн районти библиотекăсем те пур. «Чи лайăх мероприяти-сценари» номинацире Муркашри тĕп библиотека çĕнтернĕ. «Конкурса йĕркеленĕ чи лайăх ял библиотеки» номинацире Москакасси ял библиотеки мала тухнă. «Чи нумай вулакан (ачасем хушшинче)» номинацире çак библиотекăна çўрекен 11 çулхи Надя Архипована çитекенни пулмарĕ.

Сăн ўкерчĕкре: конкурс çĕнтерўçисем.

Следствии управленийĕн материалĕсем тăрăх

Эрех ĕçни ырăпа вĕçленмест

Кăçалхи апрелĕн 11-мĕшĕнче РФ прокуратури çумĕнчи Чăваш Республикинчи следствии комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следствии управленине материал килчĕ. Сăмах унта Çурлатри ялĕнче пурăнакан, 1973 çулта çуралнă Алексей Васильевич Крючков эрех ĕçсе наркăмăшланни пирки пырать. 0,7 литрлă «Кагор-32» эрехне вара вăл «Центральный» магазинра апрелĕн 2-мĕшĕнче туяннă.

Ку ĕç тĕлĕшпе тĕрĕслевсем ирттерни çавна кăтартса панă. Чăннипех те А.В. Крючков апрелĕн 2-мĕшĕнче магазинра эрех туяннă. Анчах та вăл больницăна пынин сăлтавĕ эрех ĕçсе наркăмăшланнинче мар, Мускава ĕçлеме тухса кайма юн тасатма кирлĕ пулнинче. Унччен вăл пĕр эрне хушши эрех ĕçсе пурăннă. Кун пирки унăн мăшăрĕ Т.Ю. Крючкова та, районти тĕп больницăн терапи уйрăмĕн медицина сестри Д.Д. Алтимина та, «Центральный» магазин сутуçи Э.Ф. Миронова та, эрехпе наркăмăшланакан А.В. Крючков та çирĕплетсе панă. «Кагор-32» эрехе магазина март уйăхĕнче илсе килнĕ, унăн усă курмалли срокĕ тухман.

Çапла вара А.В. Крючков суя эрехпе наркăмăшланни пирки уголовнăй ĕç пуçарассине чарма тивнĕ.

С. КОШКИН,
Етĕрнери районсем хушшинчи следствии управленийĕн аслă следователĕ.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Ăмăрту тивĕçлĕ шайра иртрĕ

Ял-йыш, пускил, тăвансем çынна асра тытаççĕ пулсан, унăн ĕмĕрĕ малалла тăсăлать, теççĕ халăхра. Ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче Тивĕш шкулĕнче республика шайĕнчи черетлĕ ăмăрту иртрĕ. Тивĕшсем хăйсен ентешне, шкул çуртне çĕклессишĕн тăрăшнă, районти «Ударник» совхозра 12 çул, Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 13 çул ертўçĕре тăрăшса ĕçленĕ, хуçалăхсене аталантарассишĕн вăйне шеллемен, «ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçленĕ» ята тивĕçнĕ А.М. Михайлова халалласа республикăри арçынсен командисем хушшинче волейболла выляссипе уçă турнир вăйăйине ирттерчĕç. Ăна йĕркелекенĕсем – А.М. Михайловăн ачисем. Вĕсен пуçарăвне республикăри волейбол федерацийĕ, Муркаш район администрацийĕ, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн администрацийĕ, Тивĕш шкулĕн администрацийĕ, шкулта ĕçлекенсем хапăл туса йышăнчĕç.

Кăçалхи турнира йыхравланине республикăри 9 команда йышăнса ăмăртăва хутшăнчĕ: Муркаш районĕнчен «Моргауши» ДОЦ, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ, «Моргаушрайбыт» предприяти, Шупашкартан «Старко», «Комтех», «Дент-амед» – Куславккасен ентешлĕхĕ, Чăваш паттăшалăх ял хуçалăх академийĕ, «Инжикон» туризмпа сервис институчĕ, Канаш хулипе Канаш районĕн «Находка» команди.

Республикăри волейбол федерацийĕн ертўçи, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Шетмепуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров, Тивĕш шкулĕн директорĕ В.А. Федотова спортсменсене ăнăçусем, çирĕп сывлăх, çĕнтерў сунчĕç.

Шкулăн спорт залĕнче кунĕпех хĕрў кĕрешў пычĕ. Çапах та Муркаш районĕнчи хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн командине çитекенни пулмарĕ. Çак команда А.М. Михайлова халалласа ирттерекен волейбол турнирĕн куçса çўрекен кубокне тата 1-мĕш степеньлĕ диплома тивĕçрĕ. 2-мĕш вырăнта – Шупашкартан килнĕ «Старко» команда. Виççĕмĕшсем те Муркашсем – ку чыса «Моргауши» ДОЦ команди тивĕçрĕ. Вĕсене 2-мĕш тата 3-мĕш степеньлĕ дипломсемпе парнесем парса чысларĕç. Уйрăм спортсменсем те парнесене илме тивĕç пулчĕç.

Тытса тăракансем, ертсе пыракансем маттур пулсан, йăла-йĕркесем те çирĕп упранаççĕ. Çакăн пек пархатарлă пуçарăва малашне те хапăл туса йышăнасса пĕлтерчĕç турнира йĕркелесе ирттерекенсем те, ăмăртăва хутшăнакан спортсменсем те.

О. ИЛЬИН, шкулти физкультура учителĕ.